25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 декабрь 10 кĕçнерникун 286 (6221) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Мускав, ВКП(б) Центральный Комитетне — Сталин юлташа

Сирĕн, Сталин юлташ, Октябрьти докладпа приказ çине ответлесе, Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем танксен „Тамбовский колхозник" ятлă колоннине тума укçа пухас ĕçе туса ирттерчĕç. Икĕ эрне хушшинче колхозниксем çак ĕç валли 40 миллион тенкĕ укçа хыврĕç. Танксен колоннине тума укçа пухни колхозлă ялăн советла патриотизмне уççăн кăтартса паракан демонстраци пулса тăчĕ. Пухнă укçа Госбанкăн отделенийĕсенчи текущи счетсенче сыхланса усранать.

ВКП(б) Тамбов Обкомĕн секретарĕ И. ВОЛКОВ.

Тамбов, ВКП(б) Обкомĕн секретарьне Волков юлташа

Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, танксен „Тамбовский колхозник" ятлă колоннине тума Хĕрлĕ Çар фончĕ валли 40 миллион тенкĕ укçа пухнăскерсене,— манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав туни çинчен пĕлтерĕр.

И. СТАЛИН.

Хамăр вăйпа танксен хăватлă колоннисене тăвар

Сулпуçăн кăçалхи Октябрь уявĕнчи историллĕ доклачĕпе приказне пурнăçлама тăван çĕршыври пĕтĕм халăх çĕкленчĕ. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене Владикавказ районĕнче аркатса тăкмаллах пырса çапрĕ, Сталинград районĕнче тата Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступление кусрĕç, нумай хуласемпе çĕршер ялсене фашистсен пусмăрĕнчен хăтарчĕç.

— Хĕрлĕ Çар малалла куçать, тыл эсĕ те унран ан юл!—терĕç хăйсене хăйсем пирĕн ĕççыннисем. Вĕсем тăшмана çĕнтерме мĕн кирлĕ, çавсене йăлтах, ытлăн-çитлĕн туса парас тĕллевпе пĕтĕм вăя, пултарулăха хурса ĕçлеме пуçларĕç. Мĕншĕн тесен ырă хыпарсемпе паллă событисем çине производствăллă çĕнĕ çĕкленупе ответлесси совет халăхĕн йăлине кĕнĕ ĕнтĕ.

Паян эпир хамăр хаçатра ВКП(б) Тамбов Обкомĕн секретарĕ Сталин юлташ патне янă çырăва пичетлетпĕр. Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çине ответлесе, танксен «Тамбовский колхозник» ятлă колоннине тума укçа пухас ĕçе пысăк çĕкленупе тытăннă. Вĕсем çак ĕç валли икĕ эрне хушшинчех 40 миллион тенкĕ укçа пухнă. Танксен колоннине тума укçа пухни колхозлă ялăн патриотизмне татах та тепĕр хут кăтартса панă.

Сталин юлташ хăйĕн ответĕнче çапла çырать: «Тамбов облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсене, танксен «Тамбовский колхозник» ятлă колоннине тума Хĕрлĕ Çар фондне 40 миллион тенкĕ укçа пухнăскерсене,—манран тăванла салам калăр тата Хĕрлĕ Çар тав тунине пĕлтерĕр».

Сталин юлташăн чĕнĕвне Чăваш республикинчи ĕççыннисем те фронта пулăшассине вăйлатнипе, производствăра çĕнĕ çĕклену тунипе ответлерĕç. Сулпуçăн доклачĕпе тата приказĕпе хавхаланнă пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-сенче ĕçлекенсем танксен колоннисене тума — укçа-тенкĕ, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли — ăшă тумтирсем пухас ĕçсене вăйлатрĕç.

Декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне республикăра танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 4.276.000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 1.060.000 тенкĕ укçа пухнă.

Танксен колоннисене тумашкăн укçа пухас ĕçĕн пĕлтерĕшне ăçта тĕрĕс ăнланса илнĕ, ăçта ВКП(б) райкомĕсемпе МТС-сен политотделĕсем ку ĕçе тивĕçлипе ертсе пыраççĕ, çавăнта колхозсемпе колхозниксен укçи-тенкипе Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарас патриотизмлă çак пысăк ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Чкаловски районра, сăмахран, декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 557.00 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 71.000 тенкĕ укçа хывнă. ВКП(б) райкомĕпе МТС политотделĕ çак ĕçе пысăк вырăна хурса, оперативно ертсе пыраççĕ. Вĕсем Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе приказне ĕççыннисене ăнлантарас, вĕсене Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе паллаштарас ĕçе фронта пулăшассине вăйлатас ыйтупа таччăн çыхăнтарса пыраççĕ. Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕç Улатăрпа Шăхасан районĕсенчи колхозсенче те начар мар пулса пырать. Улатăр районĕнче çак ĕç валли 332.000 тенкĕ, Шăхасан районĕнче—256.000 тенкĕ пухнă. Ишлей МТС-ĕнчи трактористсемпе трактористкăсем танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 100.000 тенкĕ, Комсомольски МТС-ĕн коллективĕ—69.000 тенкĕ, Канаш МТС-ĕн коллективĕ—62.000 тенкĕ пухнă.

Анчах ВКП(б) Ишлей, Калинински, Кувакино, Пăрачкав, Красноармейски, Етĕрне райкомĕсемпе вĕсен секретарĕсем, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Кувакино, Первомайски МТС-сен политотделĕсемпе вĕсен начальникĕсем танксен колоннисене тумашкăн укçа-тенкĕ пухас ĕçе тивĕçлипе хакламан, ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса пурăннă, Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе приказне ĕççыннисене çителĕксĕр ăнлантарса панă. Çавна пула ĕççыннисене фронта пулăшас çĕре тивĕçлипе мобилизацилеймен. Декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума Первомайски районра 49 тенкĕ çеç пухнă.

Тăван çĕршывăн кунçулĕ совет çыннисен фронтри тата тылри геройлăхĕнчен килет. Совет çĕрне нимĕçсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларас тесен, тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпе аркатса тăкмалла. Çакна тума пирĕн фронта ытларах та ытларах хĕçпăшал парса тăмалла. Хĕрлĕ Çар валли пур тĕрлĕ хĕçпăшал та— тупăсемпе самолетсем, танксемпе пулеметсем, боеприпассемпе снаряжени, обмундированипе продовольстви вăйлă юхăмпа парса тăрасси—пирĕн таса тивĕçлĕх. Çакна фронта пулăшас ĕçе ĕççыннисене начар мобилизациленĕ ВКП(б) райкомĕсемпе МТС-сен политотделĕсем тата вĕсен руководителĕсем халĕ те ăнланса илмен-ха.

Улатăр, Етĕрне, Красноармейски районсенче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç сÿрĕккĕн пулса пырать. Çак районсенче ăшă тумтирсем хатĕрлеме тир пухас, пухнă тирсенчен кĕрĕк пиншаксем çĕлес, çăмран çăматă йăвалас тата алшиш-нoскисем çыхас ĕç чарăнса ларнă. Ноябрĕн 1-мĕшпе декабрĕн 1-мĕшне çитиччен Етĕрнепе Красноармейски районсенче пĕр кĕрĕк пиншак та, пĕр мăшăр çăматăпа алшиш-носки те пухман. Çак фактсем ĕнтĕ Етĕрнепе Красноармейски районсен руководителĕсем фронта пулăшас тĕлĕшпе пухусенче шавласа ирттернипех лăпланса ларнине, ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса ларнине уççăн çирĕплетсе параççĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе Горкомĕсен тата вĕсен секретарĕсен танксен колоннисене тума укçа-тенкĕ тата Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçсене оперативно ертсе пымалла. Фронта пулăшас тĕлĕшпе тăвакан мĕнпур ĕçсене Сталинграда паттăррăн хÿтĕлекенсене вăйлăнрах пулăшас лозунгпа туса пымалла, ку ыйту тавра массăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса ямалла.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем! Фронта пулăшассине вăйлатар! Тамбов облаçĕнчи колхозниксем пек, эпир те Сталин юлташăн тата Хĕрлĕ Çарăн тавне тивĕçлĕ пулассишĕн вăйлăн кĕрешер!

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе пĕр халăх комиссариачĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăр тăвăн ноябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода ИККĔМĔШ ПРЕМИ пама йышăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

Декабрĕн 7-мĕшĕнче Сталинград районĕнче противникăн 44 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн подразделенисем дзотсемпе блиндажсене тата противник йышăннă уйрăм çуртсене çавăра-çавăра илсе пынă тата вĕсен гарнизонĕсене пĕтерсе пынă. 39 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ. Хулан çăтаçĕрти пайĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем противник тăракан вырăна кĕрсе кайнă та нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă рубежсене тĕреклетнĕ тата разведка тунă. Пирĕн разведка тăвакан отрядсем кун каçа нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 6 танкне тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. Пĕртăвансен Михаил, Николай тата Иван Ведерниковсен оруди расчечĕ тÿррĕн персе пĕр кун хушшинче нимĕçсен 4 танкне тата бронемашинине персе çĕмĕрнĕ, противникăн пехоти ларса пыракан 2 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, малалла куçнă. Противник уйрăм участоксенче контратакăсем тума хăтланнă, анчах та ăна пур çĕрте те каялла сирсе янă, противника пысăк сухатусем тÿстернĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен 900 салтакĕпе офицерне çити, 40 автомашинине, 10 пулеметне тата икĕ минометне пĕтерсе тăкнă. Кĕçĕн лейтенантсем Лысовецпа Шестов, рота командирĕн заместителĕн помощникĕ Гончаров, красноармеецсем Попов, Жигарев тата Нефедов нимĕçсем йышăннă халăх пурăнакан пункта вăркăнса кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем 20 гитлеровеца вĕлернĕ, чугунçула сирпĕнтерсе янă, унтан противник çинчен паха сведенисем пухса илсе, пĕр сухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Центральнăй фронтра совет войскисем, противникăн хаяр контратакисене сире-сире ярса, малалла куçса пынă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра нимĕçсем çапăçăва пĕр пехотнăй полк тата 40 танк кĕртсе янă. Пирĕн боецсем кун каçа умлăнхыçлăн тунă 7 контратакăна сирсе янă. Каçалапа гитлеровецсене каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче противникăн персе çĕмĕрнĕ 3 танкĕ тата 300 яхăн вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра Н-ски часть нимĕçсене 4 опорнăй пунктран хăваласа кăларнă. Командна́й высота çинчи опорнăй пунктшăн уйрăмах хаяр çапăçу пынă. Пирĕн боецсем противник тăракан вырăна вăркăнса кĕнĕ те, штык вĕççĕн тăрса çапăçса, тăшманăн гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 700 салтакпа офицер таран вилнĕ. 63 салтакпа пĕр офицер тыткăна параннӑ.

Великие Луки районĕнче пирĕн войскăсем çавăрса илнĕ нимĕç гарнизонĕсене пĕтерсе тăкасшăн пулса çапăçнă. Пĕр кун хушшинче темиçе гарнизона пĕтерсе тăкнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта противникран тасатнă. Çапăçу хирĕ тĕлĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 7 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Житомир облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен карательнăй отрядне тапăннă. Çапăçура совет патриочĕсем 300 нимĕçе çити вĕлернĕ, пĕр танкпа пĕр бронемашинăна пĕтерсе тăкнă, противникăн пĕр самолетне персе ÿкернĕ, тапĕрне сиенленĕ.

Венгерецсен 12-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 48-мĕш полкран тыткăна лекнĕ салтак Шондар Теруш çапла каласа панă: «Эпир Венгрирен тухса кайнă чухне пире çапла каларĕç: сире 6 уйăхран улăштараççĕ, терĕç. Акă 10 уйăх та иртсе кайрĕ ĕнтĕ, анчах пире хамăр тăван çĕршыва ярасси çинчен никам та пĕр сăмах шарламасть. Нумаях пулмасть рота командирĕ строй умĕнче çапла каларĕ: «Эпĕ сире отпуск çинчен тата улăшу çинчен калаçма, сивĕ тесе ÿпкелешме, пĕр сăмахпа каласан — тĕрлĕ майлă тарăхма чаратăп. Çавăн пек калаçу таврашне эпĕ малашне пăлхав тума хĕтĕртни вырăнне хурса шутлăп. Айăплисене пере-пере пăрахатпăр», терĕ. Килтен Венгрире чухăнлăхпа выçлăх асса кайни çинчен çыраççĕ. Нимĕçсем фронтра та венгерец салтакĕсене улталаса çаратаççĕ. Вĕсем пирĕн дивизи валли тумтир илсе килнĕ транспорта хăйсем валли тытса илнĕ. Вĕсем пурне те хăйсем валли илнĕ, эпир вара йытăсем пекех шăнатпăр».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ростов облаçĕнче калама çук тискер ĕçсем тăваççĕ. Коноваловский хуторта гитлерла бандитсем Козлов старике çакса вĕлернĕ те унăн виллине икĕ эрне хушши пытарма ирĕк паман. Горниловский хуторта нимĕçсем пур колхозниксене те килĕсенчен урама хăваласа кăларнă. 3 колхозница хăйсен килĕсене кĕрсе хăйсен ачисем валли пĕрер чĕлĕ çăкăр илсе тухнă. Гитлерла палачсем çав колхозницăсене тытнă та персе вĕлернĕ.

* * *

Бельги патриочĕсем Ламбюсарти çĕркăмрăк шахтине кĕрсе кайнă та, 800 килограмм динамит илсе, электростанцие, компрессорсене, трансформаторсене тата моторсене сирпĕнтерсе янă. Шахта нумай вăхăта стройран тухнă.

Декабрĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн чаçсем противник çине персе тăнă. Хулан заводсем вырнаçнă пайĕнче артиллерипе минометсенчен персе нимĕçсен 10 дзотне ишĕлтернĕ, минометсен 4 батарейине тата 5 пулеметнăй точкăна пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн боецĕсем пĕрлехи çапăçура тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, Дон шывĕн сулахай хĕрринче, пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Н-ски чаçăн боецĕсем противника атакăласа 400 гитлеровец таран пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕç пехотин контратакине сирсе янă. Çав çапăçура противникăн 6 танкне персе çĕмĕрнĕ тата 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски часть противника тĕреклетнĕ позицисенчен хăваласа янă, нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 3 танкне, 5 орудине тата 12 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Боеприпассем тиенĕ 17 автомашинăна тытса илнĕ.

Противникăн мотопехотипе танкĕсем çĕрле пĕр участокра пирĕн подразделенисене флангран пырса çапма хăтланнă. Тăшманăн çав хăтланăвне пирĕн артиллери пăчлантарса лартнă. Хăйсен 4 танкĕ, 15 автомашини тата пĕр ротăна çити пехоти пĕтсен, гитлеровецсем хăйсен малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступленилле çапăçусем туса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра нимĕçсем темиçе хутчен контратака тунă. Противникăн пур контратакисене те сирсе янă. Çапăçура нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, 6 орудине, 8 пулеметне тата 6 минометне пĕтерсе тăкнă.

Симонов юлташ командир пулса тăракан чаçăн зенитчикĕсем виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 15 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Новороссийск районĕнче артиллеристчерноморецсем артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă тата тăшманăн пĕр рота таран пехотине сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. 16 снайпер-моряк икĕ эрне хушшинче 171 гитлеровеца вĕлернĕ. Тинĕс авиацийĕн летчикĕсем нимĕçсем йышăннă порта тапăннă. Пĕр мотобота путарнă, 2 баржăна тата пĕр шаландăна сиенленĕ.

* * *

Витебск облаçĕнчи партизансен отрячĕ ноябрь вĕçĕнче халăх пурăнакан пĕр пунктри нимĕç гарнизонне тапăннă. Партизансем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 100 çынна ытла вĕлерсе тăкнă тата батальон штабĕн документсене, 4 пулемет, 38 винтовка, 8 пин патрон тытса илнĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ фронталла каякан 2 çар поездне ÿпĕнтерсе янă. 43 платформа тата 24 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Чугунçулăн çав участокĕ тăрăх çÿресси вара пĕр талăка чарăнса ларнă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене тискеррĕн асаплантарни çинчен калакан акта пичетлетпĕр. «Рынок ялĕн районĕнче эпир нимĕçсен асаплантарса вĕлернĕ икĕ красноармеецăн—Сталинградри трактор заводĕнче рабочи пулса ĕçленĕ Михаил Писаренкон тата узбек Бердиевăн виллисене тупрăмăр. Писаренкон аллисемпе урисене пăявпа çыхса хунă. Ӳчĕ çинче йышлă сурансен йĕрĕсем пур. Гитлерла ирсĕрсем Бердиев боецăн аллине касса татнă, штыкпа чике-чике суранланă, унтан вара вутта пăрахнă». Акта çаксем алă пуснă: ялсовет председателĕ Смольяков, 2-мĕш рангри çар врачĕ Измайлов, капитан Ершов, капитан Циова, кĕçĕн сержант Никифоров, сержант Раев, красноармеецсем Тарасов, Моловик, Фролов тата Шубин.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

СССР Верховный Советне суйлас срока тăсасси çинчен

СССР Верховный Советне суйлас срока 1943 çулти декабрьччен тăсас тата ССР Союзĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн полномочийĕсене çав срокăха малалла тăсас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти декабрĕн 9-мĕш.

Республикăри вăрман промышленноçĕ çулталăкри ĕçсен планне тултарнă

Чăваш республикинчи вăрман промышленноçĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура фронтпа çĕршывăн заказĕсене тивĕçлипе пурнăçлассишĕн кĕрешсе, пысăк çитĕну турĕ: çак çулти вăрман ĕçсен пĕтĕмĕшлĕ планне хатĕрлес енĕпе 134 процент, турттарас енĕпе 104 процент тултарчĕ. Вăрман хатĕрлевĕн çулталăкри заданийĕсене республикăри вăрман промышленность предприятийĕсем пурте тултарнă, турттарас енĕпе 4 предприяти хăйсен заданийĕсене тултарайман-ха.

Республикăри вăрман промышленность предприятийĕсем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе те ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Вутă хатĕрлемелли çурçулти задание вĕсем декабрĕн 8-мĕшĕ тĕлне хатĕрлес енĕпе 102 процент, турттарас енĕпе 86,8 процент тултарчĕç. Анчах малашне леспромхозсемпе вăрман завочĕсен вутă турттарса кăларас тĕлĕшпе ытларах ĕçлес пулать. Ку ĕçре вĕсен малта пыракан Йĕпреç, Вăрнар тата Атăл лешъенчи леспромхозсенчен пример илмелле. Асăннă леспромхозсем çак çулăн 6 уйăхĕнчи заданийĕсене срокчен тултарчĕç, халĕ вутта 1942 çулти пĕрремĕш кварталшăн хатĕрлеççĕ.

„Труд" артелĕн 11 уйăхри ĕçĕсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялĕнчи «Труд» промартель коллективĕ ноябрь уйăхĕнче производствăллă çĕнĕ çитĕнÿ турĕ. Ноябрьте продукци туса кăларасси, октябрьтипе танлаштарсан, 16,6 процент ÿсрĕ. Артель кварталти плана 165 процент, çулталăкрине—177,8 процент тултарчĕ.

Республикăри промысла коопераци артелĕсен ăмăртăвне хутшăнса, пирĕн артель коллективĕ 1942 çулта планран ирттерсе пĕр миллион тенкĕлĕх продукци пама пулнăччĕ. Коллектив халĕ çак обязательствăна пурнăçа кĕртрĕ. Кăçалхи 11 уйăх хушшиче эпир пĕлтĕрхинчен 2,5 хут ытларах продукци патăмăр.

Артельри стахановецсем хăйсен ĕç тухăçлăхне кунран-кун ÿстерсе пыраççĕ. Куллентхи нормăсене стахановец Д. Григорьев 4 хут ытла, А. Капитанова, У. Созонтова, Н. Журикова, И. Алексеев, А. Яковлев, Д. Соколов юлташсем виçшер хут ирттерсе тултараççĕ.

Артель коллективĕ производствăран юлнă япаласемпе май пур таран усă курма тăрăшать. Тумтир çĕленĕ хыççăн юлнă тир таткисен çăмне эпир касса илеех тăратпăр.

И. МОКЕЕВ.

Хамăрăн перекетленĕ укçа-тенке танксен колоннисене тума парар

ВĔРЕНЕКЕНСЕН ПУЛĂШĂВĔ

ЭЛĔК. Хирлеппуçĕнчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 359 тенкĕ пухса панă. Ку ĕçе 5-мĕш класра вĕренекенсем активлăн хутшăннă. Вĕсем пĕтĕмпе 82 тенкĕ пухнă. Пионер М. Кондратьева 10 тенкĕ, П. Алексеев, В. Матвеев 8-шар тенкĕ панă.

М. КУСТИКОВ.

ВАТĂ КОЛХОЗНИК СĂМАХĔ

КАНАШ. «Чуваш ЦИК» колхоз колхозникĕсен пухăвĕнче ватă колхозник Ильин çапла каларĕ:

— Сулпуç пире тылри ĕçе лайăх йĕрkелесе пыма, фронта татах та вăйлăрах пулăшмашкăн мĕнпур вăй-хала пĕтĕçтерме чĕнет. Эпĕ ватă, анчах çапах ĕçре çамрăксенчен юлман. Мĕншĕн тесен эпир тăрăшса ĕçлени, кĕрхи ĕçсене вăхăтра туса пĕтерни тăшмана хăвăртрах çапса аркатма пулăшнине эпĕ çирĕп ăнланнă. Эпĕ тата хытăрах ĕçлеме, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлама, фронта пулăшассине татах та вăйлатма чĕнетĕп.

Ильин юлташ сĕннисене колхозниксен пухăвĕ ырласа йышăннă. Пуху хыççăнах колхозниксем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 4000 тенкĕ пухса панă.

РАЙОН 188 ПИН ТЕНКĔ ПУХНĂ

КАНАШ. Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче фронта тата ытларах пулăшма чĕнни çине ответлесе, районри ĕççыннисемпе колхозниксем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 188.590 тенкĕ укçа пухнă.

Фронтшăн нимĕн те шел мар

Çак кунсенче Варасăрти «Правда» колхоз клубĕнче (Куславкка районĕ) колхозниксемпе колхозницăсен митингĕ пулчĕ. Митингра пирĕн войскăсем Сталинград хули районĕнче наступлени туса пыни çинчен шкул директорĕ М. Агельская юлташ доклад туса парчĕ. Колхозниксем пирĕн войскăсен ăнăçăвĕсем çинчен илтсен питех те савăнчĕç. Фронтри çĕнĕ çитĕнÿсем пире фронтшăн хĕрÿллĕнрех ĕçлеме хавхалантарчĕç. Колхоз председателĕ В. Тимофеев юлташ митингра çапла каларĕ:

— Пирĕн колхозниксем,—терĕ вăл,— вăрçă вăхăтĕнче фронтри пек ĕçлеме вĕренчĕç. Пирĕн колхоз кăçал çуракине 8 кун хушшинче вĕçлерĕ, кĕрхи тырăсене 4 кун хушшинче, çурхи тырăсене 8 кун хушшинче вырса пуçтарчĕ, ноябрĕн 10-мĕшĕнче авăн çапса пĕтерчĕ. Халĕ хĕрсех çитес çуракине хатĕрленетпĕр. Сеялкăсене, косилкăсене юсаса пĕтернĕ, плугсене те нумайĕшне юсаса лартнă.

60 çулхи колхозник С. Кузнецов юлташ çапла каларĕ: «Фронтшăн нимĕн те хĕрхенместпĕр. Эпĕ вăрçă пуçланнăранпа боецсем валли ăшă тумтирсем, парнесем ярса патăм, халĕ, çак савăнăçлă хыпара илтнĕ хыççăн, хамăр воинсем валли ăшă тумтир çĕлеме татах тепĕр тир паратăп».

Митинг хыççăн 66 çулти К. Коротков 3 тир, П. Смирнов—пĕр тир, А. Ергачева, Е. Поленова, А. Громова пĕрер мăшăр алшиш çыхса пама пулчĕç.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, колхозниксем çитес çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитме пулчĕç.

С. МИШУТКИН,
Куславкка районĕнчи Варасăр ялсовет исполкомĕн председателĕ.

Фронтовиксене—çĕнĕ çул парнисем

ЕТĔРНЕ, декабрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем фронтовиксене çĕнĕ çул ячĕпе парнесем ярса пама хатĕрленеççĕ.

Стрелецкри Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçленĕ, государство умĕнчи парăмсене татнă, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем чылай пухнă, фронтовиксене октябрь уявĕ ячĕпе парнесем ярса панă. Халĕ вĕсем Сталинград районĕнче тата Центральнăй фронтра чаплă çĕнтерÿсем тăвакан хамăрăн мухтавлă воинсене валли çĕнĕ çул ячĕпе парнесем ярса пама шутларĕç. Вĕсем фронтовиксем патне 32 килограмм аш-какай, 20 чăх, 5 килограмм пыл, 200 килограмм тулă çăнăхĕ, 150 литр сĕт ярса параççĕ.

И. ЛЬВОВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти промышленность предприятисемпе промысла кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи ноябрьти итогĕсене, çавăн пекех тата вырăнти топливăна хатĕрлес тата турттарса кăларас тĕлĕшпе пыракан ăмăртăвăн çав вăхăт хушшинчи итогĕсене пăхса тухнă.

Совнарком çапла йышăннă:

ВЫРĂНТИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР вырăнти промышленность предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче 1942 çулхи ноябрьти итогсем тăрăх Шупашкарти техно-ткацки фабрика тата Вăрнарти промкомбинат мала тухнă.

Шупашкарти техно-ткацки фабрика ноябрьти ĕçсен планне 118,1 процент тултарнă; продукци туса кăларассине, октябрьтипе танлаштарсан, 9,4 процент ÿстернĕ. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Альгешевăри çатан çыхакан «Басон» фабрикăран илсе, Шупашкарти техно-ткацки фабрикăна (директор ĕçĕсене туса пыракане Рохлин, парторгĕ Рутман, фабком председателĕ Ферсер) тата социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилемешкĕн укçан 15 пин тенкĕ пама йышăннă.

Вăрнарти промкомбинат (управляющийĕ Кузнецов, райсовет исполкомĕн председателĕ Ниткин) ноябрьти ĕçсен планне мĕнпур продукци енĕпе 124,7 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 129,7 процент тултарнă. Совнарком промкомбинатăн социализмлă ăмăртура палăрнă работникĕсене премилемешкĕн 5 пин тенкĕ премии пама йышăннă.

Совнарком ноябрь уйăхĕнче Альгешевăри çатан çыхакан «Басон» фабрика, Шупашкарти уйрăм çынсем валли атă-пушмак тата тумтир çĕлекен мастерскойсем, Кувакино, Октябрьски тата Советски районсенчи промкомбинатсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Çакăнпа пĕрлех Совнарком ноябрь уйăхĕнче Çĕмĕрлепе Канаш хулисенчи уйрăм çынсем валли тумтир çĕлекен мастерскойсем, Шупашкар, Улатăр, Канаш хулисенчи, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Сĕнтĕр, Елчĕк тата Тăвай районĕсенчи промкомбинатсем начар ĕçленине палăртнă.

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР промысла кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕнче 1942 çулхи ноябрьти итогсем тăрăх Октябрьски районри «Труд» артель, Çĕрпÿри профшкул, Етĕрне районĕнчи «Красный яр» тата Сĕнтĕр районĕнчи «Тĕрлекен» артельсем мала тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Караньялĕнчи «Труд» артелĕн аллинче хăварма (правлени председателĕ Мокеев, райсовет исполкомĕн председателĕ Петров) тата ăна социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилемешкĕн 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă. Артель ноябрьти ĕçсен планне мĕнпур продукци енĕпе 202,6 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 213,6 процент тата васкавлă заданисем енĕпе 113 процент тултарнă.

Çĕрпÿри профшкула (директорĕ Матросов, горсовет исполкомĕн председателĕ Рыжов) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилемешкĕн 10 пин тенкĕ премии пама йышăннă. Шкул ноябрьти ĕçсен планне мĕнпур продукци енĕпе 133,4 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 177,8 процент тултарнă.

Кăкшăмри «Красный яр» артеле (председателĕ Цветков, райсовет исполкомĕн председателĕ Агеев) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилемешкĕн 5 пин тенкĕ премии пама йышăннă. Артель ноябрьти ĕçсен планне мĕнпур продукци енĕпе 133 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 200 процент тултарнă.

Пушкăртри (Сĕнтĕр р.) «Тĕрлекен» артеле (правлени председателĕ Мешков, райсовет исполкомĕн председателĕ Угольников) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилемешкĕн 5 пин тенкĕ премии пама йышăннă. Артель ноябрьти ĕçсен планне мĕнпур продукци енĕпе 203,7 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 232,6 процент тултарнă.

Совнарком ноябрь уйăхĕнче Тăвай районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Шăхасан районĕнчи «Сталь», Советски районри «Трудовик», Сĕнтĕр районĕнчи «Волга», Вăрмар районĕнчи «Универсал», Элĕк районĕнчи «Большевик», Куславкка районĕнчи Киров ячĕпе тăракан артельсем тата Канашри «Авангард» артель лайăх ĕçленине палăртнă.

Çакăнпа пĕрлех Совнарком ноябрь уйăхĕнче Шупашкарти «Кожупряжь», «Металлист», «Вышивка», Çĕмĕрлери «Труженик», Канашри «Первое мая» артельсем тата Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Новински артелĕ начар ĕçленине палăртнă. Совнарком тата Тарпромсоюз уйрăмах начар ĕçленине палăртнă.

ТОПЛИВО ХАТĔРЛЕС ТАТА ТУРТТАРСА КĂЛАРАС ЕНĔПЕ

Топливо хатĕрлес тата турттарса кăларас тĕлĕшпе пыракан 1942 çулхи ноябрьти социализмлă ăмăртура вырăнти топливо промышленность управленийĕн Сĕнтĕрвăрринчи леспромхозĕ тата Первомайски районри вăрман хатĕрлекен контора мала тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Сĕнтĕрвăрринчи леспромхоз аллинчех хăварма тата ăна ĕçре палăрнă рабочисене, инженерла-техникла работниксене, служащисене премилемешкĕн 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă. Çавăн пекех Совнарком Сĕнтĕрвăрри райсовет исполкомĕн председательне Маклашкин, леспромхоз директорне Смирнов юлташсене, вĕсем октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче вутă хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарнăшăн, леспромхоза панă средствăсенчен вĕсене кашнине уйăхри ĕç укçи чухлĕ премилеме йышăннă.

Первомайски районри вăрман хатĕрлекен конторăна (директорĕ Куприянтов) ĕçре палăрнă рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене премилемешкĕн 10 пин тенкĕ премии пама йышăннă.

Совнарком ноябрь уйăхĕнче вырăнти топливăна хатĕрлес тата турттарса кăларас тĕлĕшпе Шупашкар, Çĕмĕрле тата Улатăр леспромхозĕсем, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино тата Сĕнтĕр районĕсенчи вăрман хатĕрлекен конторăсем начар ĕçленине палăртнă.

Колхозниксем железнодорожниксене пулăшаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Хусаккасси ялсоветĕнчи «Пятилетка» колхозăн членĕсем Ленинградри железнодорожниксем валли 2 центнер çĕрулми панă. Çавăн пекех «Комбайн» колхозăн членĕсем те 5 центнер, Янчеллăри «Победа» колхозăн членĕсем 16 центнер çĕрулми параççĕ. Кунсăр пуçне колхозниксем Чăваш республикинчи пĕр заводри рабочисене сутма 10 центнер çĕрулми хатĕрленĕ.

Колхоз председателĕн примерĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Хусаккассинчи «Пятилетка» колхоз председателĕ Андрей Матвеевич Матвеев юлташ пултаруллă руководитель. Кирек мĕнле ĕçе те Матвеев юлташ чи малтан хăй пуçарса пырать. Ялхуçалăх машинисене те, ĕлĕк тимĕрçĕ пулнă май, хăех ремонтлать, çунасем çĕнĕрен тăвать. Çав вăхăтрах колхоза та аван ертсе пырать. Вăл ертсе пыракан колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри. Кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене колхоз пысăк пахалăхпа ĕçленĕ. Тырпула ĕне пĕр тĕкаксăр пуçтарса кĕртнĕ.

Авăн çапнă вăхăтра колхозниксем пысăк активлăхпа ĕçленĕ. Колхоз председателĕ машинист вырăнĕнче пулса ытти колхозниксене машинăпа ĕçлеме вĕрентнĕ. Машина пĕр чарăнмасăр ĕçлесе кулленех 40 центнертан кая мар тырă çапнă. Барабанщица М. Николаева çавтери хастарлăн ĕçленĕ. 8 лавпа кĕлте кÿрсе тăракансем П. Прокопьева, И. Федорова, Д. Андреева тата ыттисем кашниех 8 урапа кÿрес вырăнне 10 урапа кÿрсе тăнă пулин те, барабанщица. Николаева юлташ çав тырра молотилка ăшне ярса тăма ĕлкĕрнĕ. Çак хĕрÿ вăхăтра председатель Матвеев юлташ молотилка патĕнчен татăлман. Яла- тасатса, амбарсене кĕртнĕ, государствăна леснĕ.

Стахановецсем тата колхоз председателĕ хăй тэ куллен хĕрÿллĕн ĕçленине пула пур колхозниксем те лайăх ĕçлеме тăрăшаççĕ, ĕç дисциплини çирĕп. Çавăнпа та 261 гектар çинчи тырра колхоз октябрĕн 23-мĕшĕнчех çапса пĕтернĕ, сентябрь уйăхĕнче государствăна тырă парса татнă. Тырă парас тĕлĕшпе уйрăмăнах транспорт бригадинчи А. Матвеева, Е. Михайлова юлташсем лайăх ĕçленĕ. Ф. Матвеев колхозник транспорт бригадинчи урапасене юсасах тăнă. Колхоз председателĕ Матвеев вĕсен ĕçне кулленех тĕрĕсленĕ. Вăл çак вăхăтрах хăй пĕччен 23 тилхепе явнă, Хĕрлĕ Çар валли пĕр урапа туса фронта ăсатнă.

Андрей Матвеевича пур çĕрте те курма пулать. Колхоз правленинче те, тимĕрç лаççинче те, столярнăй станок патĕнче те, фермăра та, амбарсем умĕнче те — пур çĕрте те вăл ĕçлеме ĕлкĕрет. Бригадирсене ĕç хушать, вĕсем тунă ĕçе çийĕнчех тĕрĕслет, колхозниксемпе калаçать, сĕнÿ парать. Вăл хăй кампа пĕлмесĕр ĕçлет, бригадирсене те хăй пек ĕçлеме вĕрентет. Бригадирсем унăн сăмахĕнчен тухмаççĕ, председатель хушнă ĕçе хăвăрт тăваççĕ. Бригадир К. Федоров хăйĕн ĕçне тĕплĕн тăвать. Çавăнпа ăна халăх юратать. Вăл кашни колхозник мĕнле ĕçре миçе ĕçкунĕ ĕçлесе илнине çийĕнчех каласа парать, ĕçкунĕсене кĕнекесем çине вăхăтра çырса хурать. Çавăнпа та унăн бригадинчи колхозниксем пур ĕçе те кар тăрса, пысăк пахалăхпа тăваççĕ.

Колхоз халь çитес çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешме пуçларĕ. Вăрлăхсене хатĕрлесе çитернĕ. Кашни вăрлăха уйрăм кĕлетсенче тата уйрăм пÿлĕмсенче тытаççĕ. Вăрлăхсем типĕ. Вĕсене колхоз кладовщикĕ В. Гурьев, колхоз председателĕ Матвеев юлташсем тăтăшах сăнаса тăраççĕ. Нумай пулмасть Андрэй Матвеевич кантăрвăрри вĕриленме пуçланине асăрханă. Ăна çав кунах типĕттернĕ. Колхоз купăста, кишĕр, выльăх-чĕрлĕх кăшманĕн вăрлăхĕсене çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Плугсем те кĕçех суракине хатĕр пулаççĕ, 17 плуга Матвеев юлташ хăй ремонтланă. Сеялкăсем ĕçе тухма хатĕр, сÿресем те типтерлĕ.

Иртнĕ çулта колхоз уя торф кăларман. Çакна шута илсе колхоз кăçал уя торф нумай кăларать, витессичен тухакан тислĕке кулленех пĕр вырăна купаласа хураççĕ. 1943 çулти çуракине тухма лашасем те çирĕп пулаççĕ.

С. ШАДИН.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Сталинград районĕ). Укерчĕк çинче: Н-ски чаçăн танкистĕсем атакăна кĕме çĕнĕ рубеж йышăнаççĕ.
Э. ЕВЗЕРИХИН фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

25 совет боецĕн чаплă ĕçĕ

ЦЕНТРАЛЬНАЙ ФРОНТ, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Совет воинĕсем пысăк хăюлăхпа чăн-чăн паттăрлăх кăтартаççĕ. Романов командир пулса тăракан подразделенири 25 боецăн чаплă ĕçĕ çинчен пĕтĕм фронтра калаçаççĕ. Красноармеецсен пĕчĕк ушкăнĕ тăшман пехотин 8 танк пулăшса пынă батальонĕпе çапăçнă.

Совет боецĕсем высота çинче окопсем чавса хÿтĕленнĕ те нимĕç салтакĕсен речĕсене пулеметсемпе тата автоматсемпе çил-тăвăллăн персе кĕтсе илнĕ. Нимĕçсем мала танксене янă, хăйсем вĕсем хыççăн шуса пынă. Красноармеецсем пехотăна танксенчен татса илнĕ те ăна пĕтерме тытăннă. Анчах та танксем малаллах кайнă. Вара боецсем гранатăсем вăркăнтарма тытăннă. Тăшманăн танкĕсен ирĕксĕрех каялла çаврăнса каймалла пулнă.

Унтан тăшман çав высота çине минăсем йышлăн персе яма тытăннă. Красноармеецсем çухатусем тÿснĕ. Политработник Данилов вилнĕ. Апла пулсан та совет боецĕсен çентерес кăмăлĕ-ирĕкĕ чакман.

Тата темиçе сехет иртсе кайнă. Геройсенчен çиччĕшĕ çеç чĕрĕ юлнă, вĕсенчен те виççĕшĕ аманнă пулнă. Анчах та чĕрĕ юлнă красноармеецсем çав высотана подкреплени пырса çитиччен хăйсен аллинче тытса тăнă.

Нимĕç оккупанчĕсен ури айĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Орел облаçĕнчи Выгоничи районĕ çулталăк ĕнтĕ нимĕç оккупанчĕсен аллинче тăрать. Пушартан сыхланса юлнă сайра-пĕр ялсем пушанса юлнă. Чĕрĕ юлнă халăхăн выçă вилĕмпе вилмелле пулать.

Фашистсем хресченсенчен тырра, çĕрулмине, лашасене, выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке тата килти япаласене туртса илнĕ. Ĕçлеме пултаракан мĕнпур халăха нимĕçсем персе вĕлерессипе хăратса Германие каторгăна хăваласа кайнă. Выгоничи районĕнчи çĕршер хресчене асаплантарса вĕлернĕ. Нумай вилĕ халиччен-ха Выгоничи станцийĕ çывхĕнче канавсенче выртаççĕ.

Зарядка ялне çĕрпе танлаштарса хунă. Çав ялта «Красный пахарь» колхоз пулнă. Унăн лайăх аталаннă выльăх-чĕрлĕх хуçалăхĕ пулнă. Колхозниксем пуян пурăннă. Нимĕçсем Зарядка ялĕнчи çынсене çаратса тухнă та пурне те Германие хăваласа кайнă. Ялта юлнă пĕртен-пĕр карчăка фашистсем персе вĕлернĕ, колхозăн çурт-хуралтисене çунтарса янă.

Михайловский, Никольск тата ытти нумай поселоксене нимĕн юлмиччен çунтарса янă. Сосновка, Уручье, Сосновое Болото ялĕсенче темиçешер кил çеç сыхланса юлнă. Районри йышлă мар халăх хушшинче ерекен чирсем пит сарăлнă. Çул çинче выçăпа вилнĕ ачасен виллисене курма пулать.

И. ГРИБОВ.

Мускава Монголи Халăх Республикин премьер-министр маршал Чойболсан пуçпулса тăракан делегацийĕ килнĕ

Декабрĕн 6-мĕшĕнче Мускава Монголи халăх республикин делегацийĕ килнĕ. Делегаци Монголи халăхĕ Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем валли хатĕрленĕ парнесен эшелонне фронта ăсатать.

Делегацие Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ, маршал Чойболсан ертсе пырать. Делегаци составне çаксем кĕреççĕ: Кĕçĕн Хуралăн Президиум Председателĕ Бумценде, Монголин Революциллĕ Халăх партийĕн Центральный Комитечĕн секретарĕ Сурунжаб, халăх ополченийĕн главкомĕ Мижид, комбриг, Монголи Халăх республикин Геройĕ Гонгор, Монголи интеллигенцийĕн представителĕсем, производство ударникĕсемпе çĕршыври чи лайăх скотоводсем.

Вокзалра делегацие çаксем кĕтсе илнĕ: Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Е. А. Щаденко, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Н. Меркулов тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн, Оборона Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсемпе пичет представителĕсем.

Делегаци пĕтĕмпе 237 вагон парне илсе килнĕ, парнесем хушшинче — 1000 тонна аш-какай, 90 тонна çу, 80 тонна колбаса, кондитер изделийĕсем 150 тонна, 30 пин кĕрĕк пиншак, 30 пин мăшăр çăмата, тиртен çĕленĕ жилетсем 30 пин тата ытти те нумай.

Çывăх кунсенчех делегаци Действующи Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене тухса каять.

Ют çĕршывсенче

Бенеш тухса калани

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки республикин президенчĕ Бенеш декабрĕн 5-мĕшĕнче Манчестерти университетăн профессорĕсемпе студенчĕсене сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Эпир халĕ хамăра хамăр иртнĕ вăрçă хыççăнхи вăхăтра туйса тăнинчен урăхларах туйса тăмалла. Вăхăтра, çак вăрçă пĕтиччченех, перемирин условийĕсене çырса хатĕрлемелле, вăл условисем мир çинчен йышăнас договорăн тĕп паллисем пулса тăмалла».

Вăрçă хыççăнхи пурнăç йĕркисене тунă çĕрте совет Российи тивĕçлипе пысăк вырăн йышăнса тăмалла, — тенĕ малалла Бенеш. — Российăна Европăри политикăран пăрса яни Мюнхен вăхăтĕнче питĕ усăллă палăрса тăчĕ, Мюнхен вăл хальхи вăрçăн чăн-чăн вассалĕ пулса тăчĕ. Ку урока эпир вĕренсе шута илтĕмĕр. Россия тĕлĕшпе иккĕленсе тăни вырăнне эпир майĕпен-майĕпенех вырăс халăхĕ агрессора мĕнле вăйлă хирĕç тăнипе савăнса хĕпĕртеме тытăнтăмăр. Мускав парăнмарĕ. Нимĕçсем курнă катастрофа 1942—1943 çулхи хĕлле тепĕр хут çĕнĕ формăпа килсе тухма пултарать. Англипе Совет Союзĕ хушшинче кăçалхи май уйăхĕнче алă пуссa тунă договор дипломатиллĕ пысăк ĕç пулса тăрать, вăл малашне Европăпа Совет Союзне пирĕн пурин интересĕсемшĕн тата пĕтĕм тĕнчери мир интересĕсемшĕн пĕрле килĕштерсе ĕçлеме май парать.

«Çĕнĕ вăрçă тухас хăрушлăха пĕтеричченех эпир Европăна çĕнĕрен йĕркелесе лартма пултараймастпăр. Канăçлă вăхăт нумайлăха пымалла, çав вăхăт хушшинче Германия Германири государствăсен пĕтĕмпех демократизацилесе тата улăштарса çитернĕ конфедерацийĕ пулса тăма пултарĕ.

1940-мĕш çулхи ноябрьте Польшăпа Чехословаки правительствисем çак вăрçă хыççăн вĕсем пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçлесси çинчен тата çав çыхăну çĕнĕ формăллă конфедераци пулса тăрасси çинчен каласа пама пултарчĕç: Вăтаçĕрти Европăра конфедераци принципне пурнăçа кĕртесси вăл унпа интересленекенсене çеç тивмест. Вăл пĕтĕм Европăри политикăна, çав шутра хăшпĕр аслă державăсене те тивет. Вĕсем çак вăрçăра пирĕн союзниксем пулса тăнă пирки, эпир çак паха ыйтусемпе хамăр çеç калаçса татăлса çав державăсене хамăр мĕн туни çинчен каласа çеç пани эпир вĕсемпе туслă пурăннипе килĕшсе тăман пулĕччĕ. Чехословаки правительстви çав йышши ĕçсем çинчен хăйĕн мĕнпур чаплă союзникĕсене те уçă кăмăлпа пĕлтерсе тăрать. Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес системăн кÿршĕ пулса тăнă пирки, Чехословакия çапла шутлать: пирĕн хамăр интерессемшĕн Совет Союзĕпе çав ыйтусем тăрăх калаçса татăлмалла. Хальхи вăрçă Германия «хĕвелтухăçнелле туртăннине» пĕтĕмпех пĕтерсе лартмалли татăклă историллĕ самант пулса тăрать тесе шутлатăп эпĕ. Çапла пултăр тесен, Польшăн, Чехословакин тата Совет Союзĕн пĕрле çыхăнса килĕштерсе ĕçлемелле. Пирĕн çакна тăвас килет: Польшăпа Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе йăлтах калаçса татăлнă хыççăн Германия «хĕвелтухăçнелле туртăннине» пĕтерес тĕлĕшпе пирĕн виçĕ çĕршыв та пĕр-пĕринпе йăлтах калаçса татăлма пултарччăр. Çак тĕлĕшпе пирĕн ĕç ăнсассăн, эпир вара Польшăпа Чехословакин мĕнпур пуласлăхне шанчăклă туса хуратпăр. Ĕç ăнмасассăн, Германия мĕнле майпа та пулин çĕнĕ катастрофа тума пултарать».

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Африкăри союзлă войскăсен тĕп штабĕ çапла пĕлтерет. Тебурда районĕнче танксем çаплах хаяррăн çапăçаççĕ. Союзниксен малти чаçĕсем авиаци пулăшса пынипе темиçе хутчен противник çине кайнă.

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи генерал-майорĕ Сьюэлл хăйĕн Тунисри операцисем çинчен çырнă статьинче çапла калать. союзниксем малалла майĕпен кайни естественнăй чăрмавсенчен тата Германи авиацийĕ хирĕç тăнинчен килет. Союзниксен Тебурдапа Джебейда районĕнчи войскисем Англин пĕрремĕш армийĕн малти чаçĕсем пулса тăраççĕ пулмалла. Çитес эрнесенче вăйлă çапăçу пуласса кĕтеççĕ.

ТЕБУРДА РАЙОНĔНЧЕ ВĂЙЛА ÇАПĂÇУСЕМ ПЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Африкăри союзлă вăйсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет. противник Тебурда районĕнче декабрĕн 6-мĕшĕнче пуçланă атакăна пула тĕнĕл держависен чаçĕсем декабрĕн 7-мĕшĕнче союзниксен позицине кĕрсе кайма пултарнă. Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем вăйлăн контратака тунă. Вара противник çĕрле каялла чакнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Çурçĕр Африкăри специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕн вăйĕ ÿссе пыни тата подкреплениесем йышлăрах пырса тăни союзниксене Тебурдаран хĕвеланăçнерехре тĕнĕл держависен моторизованнăй чаçĕсем тăвакан питех те вăйлă атакăсене тÿссе тăма май парать. Тунисри треугольникăн пысăк пайĕнче йывăр çапăçусем сарăлса пыраççĕ. Союзниксен пĕрремĕш армийĕ, çĕнĕ пехотнăй тата артиллери чаçĕсем хушса панипе вăйлăланнăскер, Тебурдаран хĕвеланăçнерехри высотасен ул ункине хăйĕн аллинче тытса тăрать. Германин Тебурдана çитнĕ танковăй колонни хĕснине союзниксен йывăр артиллерийĕ тытса чарса тăрать. Тĕнĕл держависен моторизованнăй чаçĕсем союзниксен хурçă пек çирĕп ункине татасшăн, çав ункă тĕнĕл держависен войскисене Тунисăн çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче хĕстерсе лартнă. Союзниксем кăнтăралла куçса пыни çинчен калакан хыпарсем çук, анчах та çав районра наступлени ăнăçлăн пырать тесе шутлаççĕ.

ЛИВИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, çĕр çинчи войскăсен нимĕнле паллă ĕçĕсемех те пулман.

Çапăçу районĕ тĕлĕнче авиаци активлăнрах кĕрешме тытăннă. Уйрăм илсе кăтартсан, Англи самолечĕсем Мерса-Брег районĕнче тăшманăн батарейисене ăнăçлăн атакăланă тата Сирт çывăхĕнче тăшманăн транспортне атакăланă. Англин йывăр бомбардировщикĕсем Мисурата çывăхĕнчи об'ектсене тапăннă.

СОЮЗЛĂ ÇĔРШЫВСЕНЧИ УЧЕНĂЙСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра союзлă çĕршывсенчи ученăйсен конференцийĕ пулса иртнĕ, çав конференцире 15 государствăран пынă ученăйсем пулнă. Конференци резолюци йышăннă, унта Германипе унăн союзникĕсем наука институчĕсене тăтăшах пĕтерсе пынине тата ученăйсене вĕлерсе пынине кăтартса панă. Конференцири çынсем, гитлеровецсен кашни çĕнĕ преступленийĕ çине ответлесе, пĕрлешнĕ нацисем çĕнтерессишĕн тата хытăрах тăрăшса ĕçлеме сăмах панă.

ИТАЛИН ГРЕЦИРЕ ТĂРАКАН ЧАÇĔСЕНЧИ ПАЛХАВСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат Грецире тăракан Итали чаçĕсенче дисциплина питех те начарланса кайни çинчен пĕлтерет. Италин Африкăри фронта ямалли чаçĕсенче пăлхавсем пулса иртнĕ. Салтаксем суднăсем çине ларма килĕшмен. Нумай çынна арестленĕ, пăлхав пуçласа яракансене асаплантарса вĕлернĕ. Итали Африкăра тăракан чаçĕсенче те пăлхавсем пулнă. Çавна пула Афины хулин вăтаçĕрти урамĕсенче пулеметсем лартса тухнă пулнă.

Пĕлтерÿ

Декабрĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Парткабинетăн лекцисем вуламалли залĕнче Чувашская ур., 6) Сталин юлташăн доклачĕсемпе приказĕсене вĕрекекенсем валли „Хуçалăхăн социализмлă системи—СССР çар хăвачĕн никĕсĕ" ятлă темăпа лекци пулать.

Лекцие лектор ЛЕБЕДЕВ юлташ вулать.

Билетсене парткабинетра тата ВКП(б) Горкомĕнче, 124-мĕш номерлĕ пÿлĕмре илмелле.

ВКП(б) ГОРКОМĔН ПАРТКАБИНЕЧĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Коллектив художественной мастерской при Союзе Советских художников с прискорбием извещает о смерти художника

АРХИПОВА Димитрия Семеновича,

последовавшей после продолжительной и тяжелой болезни 6 декабря 1942 года и выражает соболезнование семье умершего.

Вынос 10 декабря в 2 часа дня из больницы.

Коллектив художественной мастерской.

Артели «Металлист» Требуются рабочие—мужчины, женщины—следующих специальностей: литейщики, кузнецы, молотобойцы, жестянщики, слесаря, токаря и часовые мастера.

Обеспечиваются общежитием и столовой, оплата сдельная. Адрес: Кировский поселок, Гражданская ул., дом 3, телефон 5—45 (два звонка).

Дому Красной Армии требуются: бухгалтер, киномеханик, шофер, художник и истопник.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11828 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п